25-мӗш çул тухать. Хакӗ 15 пус.

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1942
ИЮНЬ
27
ШАМАТКУН
148(6083) №

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Горючине перекетлӗн тыткалассишӗн

Тракторсемпе тумалли ӗçсен 1942 çулти планне пурнӑçлама пирӗн республикӑри машинно-тракторнӑй станцисене 7.466 пин тенкӗлӗх бензин тата краççин кирлӗ, вӗсем машинно-тракторнӑй станцисен расхочӗн 47 процентчӗ пулса тӑраççӗ. Кунсӑр пуçне газогенераторлӑ тракторсене ӗçлеме 3.368 тонна чурка кирлӗ. Çакӑн чухлӗ горючине расходлас ӗçе государство МТС директорӗсен, ялхуçалӑхӗнчи работниксен аллине шанса парать. Ӑна пирӗн машинно-тракторнӑй станцисен ялхуçалӑхӗнчи ӗçсене ӑнӑçлӑн тунӑ çӗре хумалла, типтерлӗн расходласа, горючин кашни грамне усӑллӑ ӗçе ямалла.

Гитлерла захватчиксене хирӗç пыракан отечественнӑй аслӑ вӑрçӑ обстановкинче те государство ялхуçалӑхне кирлӗ чухлӗ горючи тата сӗрмелли япаласем парса тӑрать. Çав горючипе перекетлӗн усӑ курасси халӗ уйрӑмах пысӑк та ответлӑ ӗç, государствӑллӑ ӗç пулать.

СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ хӑйсен 1942 çулти июнӗн 20-мӗшӗнче йышӑннӑ постановленийӗнче горючине тата сӗрмелли материалсене перекетлӗн тытас тӗлӗшпе çакна паллӑ тунӑ:

«Вӑрçӑ условийӗсенче, Хӗрлӗ Çарпа халӑх хуçалӑхне горючипе сӗрмелли çусем ытларах кирлӗ вӑхӑтра, çунтармалли тата сӗрмелли япаласене перекетлени, машинно-тракторнӑй станцисенче тата совхозсенче пысӑк вырӑн йышӑнакан государствӑллӑ ӗç пулса тӑрать. Çапла пулсан та вырӑнти советсен, [illegible] горючине [illegible] машинно-тракторнӑй станцисене, совхозсене, трактор бригадисене çунтармалли тата сӗрмелли япаласене тӑкакланине салатни хирӗç тивӗçлӗ мерӑсем йышӑнмаççӗ».

ССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗн çак постановленийӗ пирӗн республикӑри машинно-тракторнӑй станцисене çӗрӗç органӗсене те пырса тивет. Пирӗн МТС-сенче горючие [illegible] перекетлӗн тыткаланипе фактсем нумай. Иртнӗ çул пирӗн республикӑри МТС-сем горючине нормӑран ытла 1.657 центнер ытларах расходланӑ. Çак бензинпа эпир 15.936 гектар ытларах сухалама пултарнӑ.

МТС директорӗсем чылайӑшӗ кӑçал та горючине тапталӗн тыткаласа [illegible] расходлас ӗçре ответлӑха туйса илмен-ха. Вӗсем горючине перекетлессипе кӗрешмеççӗ, горючи ытлашши пӗтсе пынине сӑлтавне пӗлмеççӗ, тӗрӗс расходланнине тӗрӗслемеççӗ, учет ӗçне ертсе пымаççӗ. Пирӗн МТС-сем кӑçал та горючине усӑсӑр [illegible].

Çапла, республикӑри 6 МТС кӑна кӑçал горючине нормӑна пӑхнинчен 26.433 тенкӗлӗх ытларах расходланӑ. Улатӑрти МТС—2.100 тенкӗлӗх, Комсомольски — 2.827 тенкӗлӗх, Пӑрачкав — 12.029 тенкӗлӗх, Сӗнтӗр—2.908 тенкӗлӗх, Шӑмаршӑ—1.554 тенкӗлӗх ытлашши [illegible]. Етӗрне МТС-ӗ суракинчи тракторсен планне мӗнпурӗ те 43 процент çеç пурнӑçланӑ, анчах горючине нормӑран ирттерсе 5.020 тенкӗлӗх расходланӑ. Çак асӑннӑ МТС-семпе пӗр пек [illegible] Иниц МТС-ӗ горючине 17 центнер сурӑ, Канаш МТС-ӗ 14 центнер сурӑ, Чкаловски МТС 7 центнер, Елчӗк МТС-ӗ 8 центнер перекетлесе хӑварнӑ.

Горючине перекетлес тӗлӗшпе кӑçал уйрӑмах Елчӗк МТС-ӗ лайӑх ӗçлесе пырать. Ку МТС-ӗн трактор бригадисем горючи илмелли урапасем организацилене. Бензинпа кӑраççина тракторсем касӑран тухмасӑрах насоспа илеççӗ.

МТС çунтармалли тата сӗрмелли япаласене трактор бригадисене лимит кӗнекисем тӑрӑх парса тӑрать. Лимит кӗнеки çунакан тата сӗрмелли япаласем расходланса пынине шута илсе пыма май парать, мӗншӗн тесен бригадӑсем, малтан илнӗ бензинпа ӗçлесе пӗтернӗ ӗçӗн актне панӑ хыççӑн кӑна, ӑна çӗнӗрен илме пултараççӗ. Çакӑ вӑл тунӑ ӗçсен акчӗсене вӑхӑтра çырса пырассине те йӗркелесе пыртарать. Старши агроном горючине кам мӗн чухлӗ расходланине те, тракторсем тунӑ ӗçе те, вӑл ӗçшӗн ӗçкунӗсем çырса панине те тӗрӗслесе тӑрать.

Горючине перекетлӗн тыткалама тата çухатусӑр усрама пирӗн машинно-тракторнӑй станцисен пур майсем те пур.

Нумай горючи пӗтет пирӗн ӑна турттарса килнӗ чухне тата усрама пӗлменнипе. МТС-сем бензин, кӑраççин цистернисене халӗ те кирлӗ пек сӑрпа сӑрламан-ха, цистернӑсен анисем çирӗп питӗрӗнсе тӑмаççӗ. Кусене Шупашкар, Çӗрпӳ, Красноармейски МТС-сенче яланах курма пулать. Сӗнтӗрвӑрри МТС-ӗнче горючи крансенченех тумласа тӑрать.

Трактор бригадисем краççин пичкисен анисене питӗрмесӗрех хӑвараççӗ. Хӑшпӗр МТС-сем çунтармалли япаласене юсавлӑ мар пичкесемпе турттарса нумай тӑкакалаççӗ, пичкесен пробкисем çук пирки горючи çул çинчех чӳхенсе нумай тӑкӑнса пӗтет. Бензина тата краççина виçесӗр-мӗнсӗрех илеççӗ.

Юлашки вӑхӑтра çунтармалли япаласене тӳрех трактор бригадисем ӗçленӗ вырӑна турттарса каяççӗ. Бригадирсем çунтармалли япалана возчиксенчен виçмесӗрех илеççӗ. Çакӑн пек ответсӑрлӑха халех пӗтермелле. Горючине [illegible].

Горючине перекетлес ӗçре тракторӑн вӑйӗпе туллин усӑ курни питӗ пысӑк пӗлтерӗшлӗ. Капиш тракторӑн вӑйӗпе туллин усӑ курнӑ чухне [illegible] горючи сахал кайнӑ. Анчах хӑшпӗр МТС директорӗсем [illegible]. Элӗк МТС-ӗ суракинче тракторсене плугсем çумне сӳрессем кармаса 3.222 гектар сухаланӑ. Канаш МТС-ӗ 1.222 гектар сухаланӑ. Çапла, вӗсем [illegible] 4.910 килограмм горючие усӑсӑр пӗтернӗ.

Тракторсен вӑйӗпе туллин усӑ курса горючине перекетлес ӗçре Красноармейски, Хӗрлӗ Чутай МТС-ӗ лайӑх тӗслӗхсем кӑтартса ӗçлет. Суракине кӑтартуллӑ ӗçлесе Хӗрлӗ Чутай МТС-ӗ Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ Ялавне илме тивӗçлӗ пулчӗ.

СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ ялхуçалӑх машинисене трактора [illegible] тракторсемпе [illegible] комбайнсемпе молотилкӑсене те [illegible] лайӑхлатса тӑрса тухмалла.

МТС-сене, трактор бригадисене горючие расходланине учета илес ӗçе [illegible] ӗçе çирӗп организацилемелле. Трактор бригадисене [illegible] пулмалла. Вӗсене МТС директорӗсем çирӗплетмелле, ӗçре тӗрӗслесе тӑмалла. СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ июнӗн 20-мӗшӗнче йышӑннӑ постановленийӗнче горючине нормӑран ытла расходланӑшӑн [illegible] тракторпа [illegible] трактористсене, трактор бригадирӗсене [illegible] МТС-сенче [illegible] тата горючи [illegible] расходланакан бензин хакне тӳлеттерме хушнӑ. Çакӑ ӗнтӗ трактор бригадисенче çунтармалли япаласене перекетлӗн тыткалас ӗçе нумай хут лайӑхлатма хушать.

Пирӗн кӑçал çунтармалли япаласене иртнӗ çулхинчен 10 процент сахалтарах расходламалла, усӑ курнӑ автолӑн 45 процентне пуçтарса пымалла, картертан тухакан газсене 60 процентран кая мар пуçтарса хӑвармалла, чылай комбайнсен моторӗсене краççинпа ӗçлеме куçармалла.

Пӗр МТС та кӑçал горючине нормӑран ытла расходламалла мар, горючине перекетлесси—трактористсен, МТС директорӗсемпе старши механиксен чыслӑ обязанноçӗ пулса тӑмалла.

Çар ӗçне вӗренеççӗ

СЕМЕРЛЕ. («Чӑваш Коммуни» корр.). Осоавиахимӑн райсовечӗ организацилене подразделенисене çӗршер хӗрача çар ӗçне вӗренме çӳрет. Занятисем пур çӗрте те тенӗ пекех расписани тӑрӑх çӗрте те тенӗ пекех расписани тӑрӑх эр-

Хӗрачасен çар ӗçне вӗренес хастарлӑхӗ пысӑк. Ку таранччен вӗсем винтовкӑн материальнӑй пайӗсене, стройпа утма, сывлӑшран килсе тапӑннинчен сыхланма т. ыт. правилӑсене те вӗреннӗ. Уйрӑм боецсем: Брехова, Церкова, Улицкая, Николаева, Родионова, Хлыгова, Аршинина юлташсем пур дисциплинӑсемпе те «отлично» вӗренсе пыраççӗ, занятисене пӗр сиктермесӗр çӳреççӗ.

Радистсемпе тата телефонистсем хатӗрлекен курссенче те занятисем организованно иртеççӗ. Занятисене радиопа телефон ӗçне лайӑх пӗлекенсем Вьюговпа Минеев юлташсем ирттереççӗ. Занятисем çав курссенче те эрнере икӗ хут пулса иртеççӗ. Сорокина, Курасова курсантсем уйрӑмах вӗре нӳре лайӑх тӗслӗхсем кӑтартаççӗ.

Х. ЛИСИН.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Июнӗн 25-мӗшӗнчи каçхи пӗлтерӳ

Июнӗн 25-мӗшӗнче Харьков енче пирӗн войскӑсем противникӑн наступлени тӑвакан войскисене хирӗç çапӑçнӑ. Хаяр çапӑçусем хыççӑн пирӗн чаçсем Купянск хулине хӑварнӑ.

Фронтӑн Севастополь участокӗнче пирӗн войскӑсем противникӑн йышлӑ тата хаяр атакисене сир-сире янӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче нимӗнле улшӑнусем те пулман.

* * *

Июнӗн 24-мӗшӗнче пирӗн авиаци чаçӗсем фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗçсен 85 танкне, войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 300 автомашинине, боеприпассем тиенӗ 40 лавне, зенитнӑй пулеметсен 18 точкине пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, зенитнӑй тата полевой артиллерин 17 батарейине пусарнӑ, икӗ транспортне путарнӑ, боеприпассен складне сирпӗнтерсе янӑ, чугунçулсен темиçе складне çӗмӗрнӗ тата нефть складне вут тивертсе янӑ, противникӑн пехотине 2 батальона çити сапаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Харьков енчи участоксенчен пӗринче нимӗçсен командованийӗ сывлӑшран пыра-пыра çапса хӑйӗн тип çӗр çинчи войскисене çул уçса парасшӑн хӑтланать. Пирӗн летчиксем пӗр кун хушшинче 30 çапӑçура ытла пулнӑ, çав çапӑçусенче вӗсем нимӗçсен 51 самолетне персе антарнӑ е сиенленӗ. Хамӑрӑн войскӑсене хӳтӗлесе пырса, пирӗн авиаци çав вӑхӑтрах нимӗçсен сывӑх тылӗсене аркатмаллах пыра-пыра çапать. Старши политрук Недельков командир пулса ертсе пыракан пирӗн самолетсен групписем вӑрманта противникӑн танкӗсемпе автомашинисем пӗр çӗре пухӑнса тӑнине курнӑ. Сасартӑк вӗçсе пырса, совет летчикӗсем нимӗçсен 27 танкне, войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 63 автомашинине тата 6 бензоцистернине пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ.

* * *

Севастопольри тинӗс çыранӗнчи артиллеристсем нимӗçсен 25 танкне пӗтерсе тӑкнӑ тата противникӑн 16 самолетне персе антарнӑ.

* * *

Нимӗçсен пехоти Прокопов лейтенантӑн подразделенийӗ хӳтӗлесе тӑракан позицисене атакӑланӑ (Çурçӗр-Хӗвеланӑç фрончӗ). Пирӗн боецсем, штык вӗççӗн тӑрса çапӑçса, гитлеровецсен атакине сирсе янӑ. Трофейӑсем тытса илнӗ: 7 пулемет, 4 автомат, 2 миномет, нумай винтовкӑсем тата патронсем.

* * *

Пирӗн артиллеристсем тӑшманӑн укрепленийӗсем çине ӑнӑçлӑн пенӗ (Калинин фрончӗ). Противникӑн 26 блиндажне, унта пулнӑ салтакӗсемпе пӗрлех, 4 станковӑй пулеметне, 3 автомат-туппине тата шултӑра калибрлӑ пулеметне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Пирӗн 10 разведчик, старши лейтенант Беловашев ертсе пынипе, çын курман вырӑнсемпе противникӑн тылне кӗрсе кайнӑ. Разведчиксем гитлерла салтаксем пӗр ушкӑн çывхарса килнине курнӑ, разведчиксем гитлеровецсене çывӑхах пыма панӑ та нимӗçсен 60 салтакне вӗлернӗ. Пӗр гитлеровеца тыткӑна илсе тата пулеметпа документсем тытса илсе, разведчиксем хӑйсен чаçне таврӑннӑ.

* * *

Орел облаçӗнчи партизансен С. юлташ ертсе пыракан отрячӗ хӑйӗн боевой ӗçӗсене тума пуçланӑранпа нимӗçсен 11 самолетне, 45 автомашинине, грузсем турттарса пыракан 26 лавне пӗтерсе тӑкнӑ, чугунçулпа пыракан 3 эшелона ӳпӗнтерсе янӑ тата темиçе кӗпер сирпӗнтерсе янӑ. Нимӗç оккупанчӗсене хирӗç пынӑ çапӑçусенче партизансем 800 гитлеровеца ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Отряд противникран 10 пулемет, 14 автомат, винтовкӑсемпе пистолетсем нумай тытса илнӗ.

* * *

Испанин «Кӑвак дивизийӗн» 263-мӗш полкӗнчен Хӗрлӗ Çар енне куçнӑ ефрейтор Франциско В. çапла каласа панӑ: «Пирӗн эшелонра 1.000 çын пулнӑ. Сан-Себастьян хулинчен эпир апрелӗн иккӗмӗш çурринче тухрӑмӑр. Çул çинче эпир пирӗнтен малтан кайнӑ эшелон Испани влаçӗсене хирӗç тӑни çинчен пӗлтӗмӗр. Салтаксем капитана вӗлернӗ те Российӑна каймастпӑр тесе отказ панӑ. Полицие илсе пыма тивнӗ. Салтаксемпе полици хушшинче юнлӑ тытӑçу пулса иртнӗ. Икӗ енчен те вилнисем, аманнисем пулнӑ. Пирӗн эшелонра та çул çинче ӗçсем лайӑхах пулман. Эпир Франци урлӑ килтӗмӗр. Французсем пире хӑйсен тӑшманӗсем вырӑннех шутлаççӗ. Эндей патӗнче чугунçул çинче ӗçлекен француз рабочийӗсем чугунçул линине пӑсса тӑкнӑ, вара пирӗн поезд çул çинчен пӑрӑнса анчӗ. Эпир пӗр уйӑх ытла Ауэрбах хулинче (Германия) тӑтӑмӑр. Унта пире вӑрçӑ ӗçне вӗрентрӗç. Унта Испани салтакӗсен тата тепӗр эшелонӗ çитмеллеччӗ, анчах та вӑл эшелон килмерӗ. Кайран эпир çав эшелона илсе пыракан поезд çине Англи самолечӗсем бомбӑсем вӑйлӑн тӑкни çинчен пӗлтӗмӗр. Унта салтаксем питӗ нумай пӗтнӗ, чӗрӗ юлнисем каялла Испание таврӑннӑ. Эпир Совет Союзӗпе Германи хушшинчи вӑрçӑ фронтне çитни нумаях пулмасть. Май килсенех, эпӗ Хӗрлӗ Çар енне каçса тартӑм».

* * *

Пирей портӗнчен (Греция) тухнӑ итальянецсен карапӗ çинче взрыв пулнӑ. Транспорт шыва путнӑ. Çапла шутлаççӗ: карапа тиенӗ чухне Греци патриочӗсем карап çине взрыв тӑвакан машинӑна пытарса лартнӑ, взрыв çав машинӑран пулнӑ, теççӗ.

Июнӗн 26-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Июнӗн 26-мӗш ыран тенӗ чух çӗрле Харьков тата Севастополь енче пирӗн войскӑсем противника хирӗç çапӑçнӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

* * *

Севастополе паттӑррӑн хӳтӗлекенсем—Приморски çарӑн боецӗсемпе Хура тинӗс флочӗн краснофлотецӗсем нимӗçсен фашистла войскисен атакисене хӑйсен пурнӑçӗсене хӗрхенмесӗр çапӑçса сире-сире пӑрахаççӗ. Старши лейтенантӑн Воробьев юлташӑн батарейинчи артиллеристсем юлашки кунсем хушшинче противникӑн пирӗннинчен йышлӑрах вӑйӗсен 30 атакине сирсе янӑ, çав хушӑра нимӗçсен салтакӗсемпе офицерӗсене 500 çынна çити пӗтерсе тӑкнӑ. Пысӑк çухатусем тӳссе тӑшман батарейӗ патне çӗмӗрсе кӗме тата ӑна çавӑрса илме пултарнӑ. Артиллеристсем вара кӳршӗри батарайӑсенчен хӑйсем çине пеме ыйтнӑ, вӗсем ӑçта пемеллине кӑтартса тӑнӑ. Çӗмӗрсе кӗнӗ гитлеровецсене пӗтерсе тӑкнӑ. Старшина Малофеев юлташ 2 краснофлотецпа пӗрле нимӗçсен танкӗ патне шуса пынӑ та танка противотанковӑй гранатӑсемпе сирпӗнтерсе янӑ. Противник пирӗн траншейӗсенчен пӗрине йышӑнса илнӗ. Старши лейтенант Кузнецов командир пулса тӑракан подразделенири боецсем, хӑюллӑн контратакӑна кӗрсе кайса, нимӗçсене траншейӑран хӗссе кӑларнӑ тата 100 гитлеровеца ытла пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Пирӗн разведка пӗр аэродромра нимӗç бомбардировщикӗсен пысӑк ушкӑнӗ ларнине палӑртнӑ. Противникӑн аэродромӗ патне çийӗнчех Мазуркевичпа Салов юлташсем командир пулса ертсе пынипе пирӗн истребительсем тата Сашихинпа Чечиков юлташсем ертсе пынипе штурмовиксем вӗçсе пынӑ. Зениткӑсенчен вӑйлӑн персе тӑнине пӑхмасӑрах, пирӗн штурмовиксемпе истребительсем нимӗçсен 22 самолетне çунтарса янӑ тата 20 самолетран кая мар сиенленӗ. Старши лейтенантсем Решетников, Сапогов тата Попов юлташсем противникӑн сывлӑша çӗкленме хӑтланнӑ виçӗ бомбардировщикне персе ӳкернӗ. Пирӗн летчиксен çухатусем пулман.

* * *

Брянск фрончӗн участокӗсенчен пӗринче Анашкин юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçри боецсем нимӗçсенчен çирӗплетнӗ высотана туртса илнӗ. Противник, çапӑçу тирне хӑйӗн аманнӑ салтакӗсемпе офицерӗсене 450 çынна ытла пӑрахса хӑварса, каялла чакнӑ.

* * *

Хӗвеланӑç фрончӗн уйрӑм участокӗсенче пирӗн артиллерирен персе нимӗçсен 5 двочӗпе блиндажне çӗмӗрнӗ, 5 пулеметне, 3 трактор-тягачне пӗтерсе тӑкнӑ тата нимӗçсен салтакӗсемпе офицерӗсене 200 çынна çити вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Снайперсем Галушкин, Ивакин тата Шматков юлташсем пӗр кун хушшинче 10 гитлеровеца вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Ленинград партизанӗсен Х. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячӗ нимӗç оккупанчӗсен карательнӑй отрядне хирӗç темиçе кун хушши çапӑçнӑ. Противника вӑрмансемпе шурлӑх вырӑнсене илсе кӗрсе, партизансем нимӗçсен 80 салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ. Партизансен Б. юлташ командир пулса ертсе пыракан тепӗр отрячӗ противникӑн чугунçул тӑрӑх пыракан çар эшелонне ӳпӗнтерсе янӑ. Крушени пулнӑ пирки 250 гитлеровец пӗтнӗ.

* * *

Нимӗçсен запасри 267-мӗш артдивизионӗнчен тыткӑна лекнӗ салтак Гейнц К. çапла каласа панӑ: «Вӑрçӑ нумай салтаксене йӗрӗнтерсе çитерчӗ. Дисциплина япӑххи тата салтаксем ытларах та ытларах тарма тытӑнни çакӑнтан килет ӗнтӗ. Май уйӑхӗн вӗççинче военно-полевой суд Пауль Риттер, Фриц Гарре, Рудольф Новак, Альфред Томачек тата ытти салтаксене персе пӑрахмалла турӗ. Пурте вӗсем фронтран тарса кайнӑ, анчах та вӗсене тытнӑ. Салтаксенчен чылайрахӗш пайӗ Геббельсӑн тата нимӗç радиовӗн пӗр сӑмахне те ӗненмест. Пирӗн дивизионри салтак нумаях пулмасть çакӑн пек юптару туртса кӑларчӗ: «Нимӗç ачи хӑй аппӗшӗнчен çапла ыйтать: «Атте, радиона ярха, эпӗ верховный командованин юмахӗсене итлес тетӗп». Шиллерӑн хӑйӗн хӑюлӑхӗшӗн тӳсме лекрӗ. Июнӗн 13-мӗшӗнче ӑна 5 çуллӑха тӗрмене хупмалла турӗç».

* * *

Нимӗçсен 79-мӗш пехотнӑй дивизийӗн 226-мӗш полкӗнчи 11-мӗш ротӑран тыткӑна лекнӗ салтак Франц Кратке çапла каласа панӑ: «Нимӗçсен çар влаçӗсем оккупацилленӗ совет районӗсенчи мирлӗ халӑха тискеррӗн асаплантарни çинчен эпӗ çирӗплетсе калама пултаратӑп. Гайворон хулинче (Одесса облаçӗ) гестаповецсем хӳтлӗхсӗр хӗрарӑмсенчен ирсӗррӗн мӑшкӑлланӑ. Вӗсем çав пысӑк мар хулара кӗске вӑхӑт хушшинчех 85 çынна асаплантарса вӗлерни çинчен эпӗ тӗрӗссипех пӗлетӗп».

* * *

Гестапо распоряженийӗ тӑрӑх София хулинчи тӗп тӗрмене нимӗçсен нумай салтакӗсене, вӗсем вӑрçа хирӗç уççӑнах калаçнӑшӑн, хупа-хупа лартни çинчен пӗлтереççӗ.

Совет Союзӗн „Ангарстрой“ ятлӑ пароходне Япони çыранӗсем патӗнче путарни

ХАБАРОВСК, июнӗн 24-мӗш. (ТАСС). Харбинран пӗлтернӗ тӑрӑх, унта Дайронран Совет Союзӗн «Ангарстрой» ятлӑ пароходӗн, майӑн 1-мӗшӗнче Япони çыранӗсем патӗнче торпеда ярса путарнӑскерӗн, тӑван çӗршыва таврӑнакан команди пырса çитнӗ. «Ангарстроя» мӗнле путарнине тӗрӗслесе пӑхсан, ӑна Японин подводнӑй лодки путарни паллӑ пулса тухать. Апрелӗн 24-мӗшӗнчех пароход Япони çыранӗсенчен 130 мильӑра Японин çар карапӗ тытса чарнӑ, совет пароходӗн çав карап хыççӑн Японин сывӑхри портне кайма лекнӗ. Портра пӑхса тухнӑ хыççӑн, пароход Японин влаçӗсем кӑтартнӑ çулпа тӑван çӗршыва килме тухнӑ. Майӑн 1-мӗшӗнче Япони çыранӗсенчен 32 мильӑра пароход çине 2 торпеда янӑ та вӑл часах путнӑ. Пароход путарнӑ вырӑнта, «Ангарстрой» команди çӑлӑнса юлнӑ шлюпкӑсем патӗнче, часах Японин икӗ подводнӑй лодки курӑнса кайнӑ. Вӗсем Япони пароходӗ патне, Совет командине хӑй çине илнӗскер патне, çитиех шлюпкӑсемпе пӗрле пынӑ. «Ангарстроя» путарнин çавнашкал обстоятельствисене кура-тӑркачах тата пароход Японин тинӗс çар вӑйӗсем вӑйлӑн хуралласа тӑнӑ вырӑнта путарни çинчен калакан факта пӑхмасӑрах, Япони хаçачӗсем, Японири официальнӑй представительсен сӑмахӗсем тӑрӑх, совет пароходне Японин подводнӑй лодки мар, Америкӑн подводнӑй лодки путарнӑ тесе çыраççӗ. «Ангарстройӑн» çӑлӑнса юлнӑ команди çав калаçу вӑл нимӗнле критикӑна та тӳсеймест тесе пӗлтерет. Мӗншӗн тесен совет пароходӗ мӗнле обстоятельствӑра пӗтнине тӗплӗн тӗрӗслесе тӗпчени совет пароходне Японин подводнӑй лодки путарнине кӑтартса парать.

Фашистсен тискер кайӑкла хӑрушӑ ӗçӗсем

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, июнӗн 18-мӗш. (ТАСС спецкорӗ). Орел облаçӗн нимӗçсем оккупациленӗ районӗсенчен пӗринче кӗрешекен партизансен отрядӗнчен фашистла ирсӗрсен тискер кайӑкла çӗнӗ ӗçӗсем çинчен хыпар илнӗ.

Березки ялӗнчи çынсене гитлеровецсем колхоз амбарне хӑваласа кӗртнӗ те унта штыксемпе чиксе тата прикладсемпе çапса 150 çынна ытла вӗлернӗ. Колхозниксен 12 çултан пуçласа 13 çула çитиччӗнхи ачисене — 11 ачана фашистсем чӗрӗллех çӗре пытарнӑ. Гитлеровецсем уйрӑмах хӗрарӑмсене вӗсем партизансене пулӑшаççӗ тесе тискеррӗн асаплантараççӗ. Нимӗçсем сакӑршар хӗрарӑма урапана кӳлеççӗ те хӗçпӑшалпа хӗратса вӗсене малти позицисене боеприпассем турттарттараççӗ.

Предприятисемпе артельсенчи социализмлӑ ӑмӑрту

Пир-авӑр ытларах туса кӑларассишӗн

Шупашкарти пир-авӑр фабрикин тӗртекен цехӗсем юлашки вӑхӑтра начар мар ӗçлеççӗ. Вӗсем июнь уйӑхӗн малтанхи çурринчи плана ытлашшипех тултарнӑ. Рабочисен хушшинчи ӑмӑртура пир тӗртекен Пирожковӑпа çип çӑмхалакан Хвастунова малта пыраççӗ. Вӗсем хӑйсен нормисене кашни сменӑрах икӗ хут ирттерсе тултараççӗ. Ергунова работницӑн ӗç тухӑçлӑхӗ те çавӑнтан каях мар. Июнӗн 14-мӗшӗнче вӑл икӗ норма тултарнӑ. Ӗç тухӑçлӑхне ытти работницӑсем те ӳстерсех пыраççӗ. Июнӗн 17—18-мӗшӗсенче сменӑри нормӑна пур рабочисем те вӑтамран 120-шер процент тултарчӗç. Ӗçри çакӑн пек çитӗнӗве вӗсем демократиллӗ аслӑ çӗршывсен гитлерла Германие хирӗç пыракан вӑрçӑри туслӑхӗ çирӗпленни çине ответлесе турӗç.

Пир-авӑр фабрикин коллективӗ, Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса, июнь уйӑхӗнче планран ирттерсе 20 пин метр продукци пама обязательство илнӗ. Иртнӗ кунсенчи ӗçсем коллектив çак обязательствӑна ӑнӑçлӑн пурнӑçласа пыни çинчен калаççӗ.

М. СМЕТАНИН.

Кая юлса пыма сӑлтав çук

КАНАШ. Сталин ячӗпе тӑракан промысла артелӗ производство планне тултарса пымасть. Пӗрремӗш квартал планне вӑл 32 процент çеç тултарнӑ, апрельпе май уйӑхӗсенче те чӑтма çук начар ӗçлерӗ. Çапла вара кӑçалхи пилӗк уйӑх хушшинче кӑна та артель планпа пӑхнинчен 429.420 тенкӗлӗх продукци сахалтарах туса кӑларнӑ.

Артель ӗçӗнче ӗççыннисем валли куллен кирлӗ таварсем туса кӑларасси паллӑ вырӑн йышӑнса тӑмалла. Пӗрремӗш кварталта артель кашӑксем, хурт-хӑмӑр вӗллисем, каткапичкесем, урапа ешӗккӗсемпе кустӑрмисем, кӗреплесем тата ытти те пурӗ 20.000 тенкӗлӗх туса кӑлармалла пулнӑ. Анчах пӗтӗмпе те 5.400 тенкӗлӗх кӑна туса кӑларнӑ. Васкавлӑ заказсене те çуррипчен ытла пурнӑçлайман.

Артель начар ӗçлени çинчен ВКП(б) райкомӗ те, райсовет исполкомӗ те сӳтсе явнӑ, решенисем йышӑннӑ. Анчах вӑл решенисем пурнӑçа кӗрсе пыман, артель ӗçӗ лайӑхланман. Вӑхӑтлӑха правлени председателӗ пулса ӗçлекен Кузнецов юлташ артель ӗçӗ чаплӑ маррине ӗç вӑйӗ тата чӗртавар çитменнипе ӑнлантарса парать.

Артелӗн Анаткас Уçырмари кашӑксем тӑвакан мастерскойӗнче (заведующийӗ Федотов юлташ) 22 çын ӗçлес вырӑнне 5 çын кӑна ӗçлет. Çавӑнпа мастерской пӗрремӗш квартал планне 10 процент та тултарайман.

«Специалистсем çук» тесе, вӑрçӑ йывӑрлӑхӗсем умӗнче чарӑнса тӑни килӗшӳсӗр. Артель руководителӗсем çакна ӑнланса илме тивӗçлӗ ӗнтӗ: производствӑра ӗçлеме хӗрарӑмсене хутшӑнтармалла, çамрӑксене вӗрентсе хатӗрлемелле.

Кунсӑр пуçне, рабочисен квалификацине ӳстерес, çамрӑксене ӗçре пулӑшса пырас ыйтусемпе артельре пачах интересленмеççӗ. Кузнецов юлташ каланӑ тӑрӑх, артельре ӗçлекен вунӑ çамрӑкран виççӗшӗ кӑна хӑйсен нормисене тултараççӗ, ыттисем, ӗçрен ӗçе куçнӑ пирки, нормӑсене тултараймаççӗ.

Артельре ӗçлекенсем хушшинчи социализмлӑ ӑмӑртӑва çителӗклӗн ертсе пымаççӗ. Агитацилле-массӑллӑ ӗçе те тивӗçлипе туса пыни çук. Апрель уйӑхӗнче илнӗ обязательствӑсене халӗ те тӗрӗслемен, вӗсем хут çинчех тӑрса юлнӑ.

Кая юлса пыма нимӗнле сӑлтав та çук. Артелӗн ӗçӗсене васкаса вӑрçӑ ыйтнӑ пек йӗркелесе ямалла.

П. НИКОЛАЕВ.

Виççӗмӗш пятилетка (тӑваттӑмӗш кӑларӑм) заемӗн малтанхи выляв

Июлӗн 5-мӗшпе 6-мӗш числисенче Виççӗмӗш пятилетка (тӑваттӑмӗш çулхи кӑларӑм) заемӗн малтанхи вылявӗ пулса иртет. Мӗн пурӗ 840.000 выигрыш, 131.222.000 тенкӗлӗх пулать.

Ку вылявра, вӑтамран, кашни 83 облигацирен пӗр облигацийӗ выляса илет.

Выляв Мускавра Союзсен Çурчӗн Октябрьски залӗнче пулса иртет.

Ку заемӑн кӑçал кунсӑр пуçне татах 3 выляв: сентябрӗн 25-мӗшӗнче, ноябрӗн 25-мӗшӗнче тата декабрӗн 25-мӗшӗнче пулать. (ТАСС).

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ыйту райсовет сессийĕнче

Нумаях пулмасть Сĕнтĕр райсоветĕн вунпĕрмĕш черетлĕ сессийĕ пулса иртрĕ. Сесси обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пурнăçа кĕртесси çинчен сÿтсе-яврĕ. Малта пыракан колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе пысăк çитĕнÿсем турĕç. Районĕпе майракаллă шултăра выльăхсем енĕпе — 44 колхоз, сыснасем енĕпе — 32 колхоз, сурăх-качакасем енĕпе 21 колхоз государство планне ирттерсе тултарнă. Тăватă уйăх хушшинче колхозсенчи майракаллă шултăра выльăхсен хисепĕ 14,8 процент, сыснасен хисепĕ 19,8 процент, сурăхсемпе качакасен хисепĕ 28,2 процент ÿснĕ.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх хисепне ÿстерес шутпа районри колхозсен пăрусене, сысна çурисене контрактацилемелли плана пĕтĕмпех пурнăçланă. Анчах путексене контрактацилес ĕç çителĕксĕр пулса пырать. План тăрăх районĕпе 1000 путек контрактацилемелле пулнă пулсан, пурĕ 580 путек çеç контрактациленĕ. Ахманей тата Калайкасси ялсоветĕнчи колхозсенче çамрăк выльăхсене контрактацилес ĕçе халĕ те тытăнман.

Выльăх-чĕрлĕхсен йышне ÿстерессе чуптару кампанине вăхăтра йĕркелесе ирттерни нимĕнчен те килет. Оринино ялсоветĕнчи «Красное Сормово» тата Мурькаш ялсоветĕнчи Буденный ячĕпе пăракан колхозсем выльăхсене чуптарса хăвармалли плана пурнăçа кĕртнĕ. Районĕпе илсен, выльăхсене чуптарас тĕлĕшпе ĕç çителĕксĕр пулса пырать.

Хăшпĕр колхозсенче çамрăк выльăхсене ытла та начар пăхаççĕ. Тепей ялсоветĕнчи «Майăн 1-мĕшĕ», «Колос» колхозсенче, «Аврора», Мичурин ячĕпе тăракан тата «Волга» колхозсенче çамрăк выльăхсем вилни пулнă. Çакă вара колхоз руководителĕсем тата райçĕрĕç пайĕн зоотехникĕсем çамрăк выльăхсене пăхса ÿстересси çине ответлăхсăр пăхнинчен килнĕ.

Доклад тăрăх тухса калакансем нумайĕшĕсем выльăх-чĕрлĕх пăхас ĕçĕн опычĕсем çинчен, выльăхсен продуктивноçне ÿстермелли майсем çинчен каласа пачĕç.

— Эпир кăçал 26 ĕнерен 26 пăру, 58 сурăхран 65 путек, 13 сысна аминчен 128 сысна çури алла илтĕмĕр. Çамрăк пăрусем талăкра 1,1-шер килограмм хушăнса пыраççĕ. 1942 çулшăн государствăна сĕтçу, аш-какай, çăмарта памалли плансене ăнăçлăн тултартăмăр, — тет «Красное Сормово» колхозри выльăх-чĕрлĕх фермисен заведующийĕ орденоносец К. Григорьева юлташ. «Свобода» колхозри сысна фермине ĕçлекен Антон Семенов 7 сысна аминчен 71 çăвăр илни çинчен каласа пачĕ.

Районри çарĕç комиссарĕ Анисимов тата прокурор Ефимов юлташсем районри çĕрĕç пайĕн заведующине Кожаков юлташа вăл хăйĕн ĕçне сÿрĕккĕн туса пынăшăн хытă критикăларĕç. Вăл нумаях пулмасть «Пионер» колхозра пулнă. Колхозра уй-хир ĕçĕсем мĕнле пынине тĕрĕсленĕ, анчах выльăх-чĕрлĕх фермисен ĕçĕсемпе пĕртте интересленмен. Ку колхозра кăçал 2 тиха, пĕр ĕне вилнĕ, талăкра кашни ĕнерен чĕрĕк литр кăна сĕт сăваççĕ. 30 чăхран кунне 10—12 çăмарта çеç илеççĕ. Çак çитменлĕхсене палăртса, колхоза кирлĕ пек пулăшу парасси çинчен Кожаков аса та илмен.

Сесси СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «Çамрăк выльăхсене сыхласа усрамалли тата колхозсемпе совхозсенчи выльăх-чĕрлĕхсен хисепне ÿстермелли мерăсем çинчен» йышăннă постановлени пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе тимлĕрех ĕçлеме кирлине палăртрĕ.

Т. А.

Комбайнсене юсас ĕç юлса пырать

КАНАШ. (Телефонпа). Çитĕнсе пыракан тырăсем часах ак пулса çитĕç. Тырпулсене пухса кĕрес хĕрÿ вăхăт çывхарать. Ăна вăхăтра, пĕр тăккалмасăр пухса кĕни нимĕç захватчикĕсене пĕтĕмпех аркатса тăкассине çывхартать. Çак кĕске вăхăтлă хĕрÿ ĕçе пысăк пахалăхпа туса ирттерни — ял хуçалăхĕнчи пĕтĕм ĕçсене тухăçлăн ĕлкĕртни пулса тăрать. Çавăнпа та районри колхозсен, машинно-тракторнăй станцин тырпула пухса кĕртес ĕçе лайăх хатĕрленсе кĕтсе илмелле.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ иртнĕ çулта декабрĕн 23-мĕшĕнче [illegible] постановлени [illegible]

[illegible] пырать-ха. Ку çеç те мар, МТС работникĕсем ку постановлени çинчен пачах та манса кайнă, ăна пурнăçа кĕртме комбайнерсемпе ремонт ĕçĕнче ĕçлекен рабочисене мобилизацилемен.

Комбайнсене юсама тытăнни икĕ уйăх иртрĕ, çапах та паянхи куна 9 мотор çеç юсанă, комбайнсен ытти пайĕсене юсама пачах та тытăнман. Çапла, 14 комбайнран паянхи куна пĕри те ĕçе тухма хатĕр мар. МТС-ăн сложнăй молотилкăсем пурĕ 9. Вĕсене те юсама тытăнман, вĕсем мĕн таран ĕçе юрăхлине те шута илмен.

[illegible]

Ф. МАЛЫШКИН.

Осоавиахим райсоветĕ инструкторсемпе ĕçлеместь

ЕТВРНЕ. Чурпай ялсоветĕнчи «Правда» тата Киров ячĕпе тăракан колхозсенче [illegible] ПВХО ĕçне вĕрентнĕ. Çав колхозсенче инструкторсем пулса учительсемпе учительницăсем Шумилова, Мурзина тата Цветков юлташсем тимлĕн ĕçлерĕç.

Сывлăшран тапăннинчен сыхланма вĕрентес ĕçре районра çитменлĕхсем нумай. Осоавиахимăн райсоветĕ иртнĕ çулта 35 инструктор вĕрентсе хатĕрленĕ, анчах кайран çав çынсене ĕçлеме, вĕсем мĕнле ĕçленине тĕрĕслесе пăхман. Çакна пула курсран вĕренсе тухнă инструкторсем чылайĕшĕ хăйсен пурăнакан ялсемпе колхозсенче, сăмахран, Атликассинче, Апташкассинче, Пырçырланра ПВХО занятийĕсене пачах ирттермен. Нумай çĕрте занятисем пулнă, анчах вĕренекенсенчен зачетсем йышăнман.

И. ТИМОНИН.

Ют çĕршывсенче

Европăра Америкăри Пĕрлешуллĕ Штатсен хĕçпăшаллă вăйĕсен операцийĕсене пуçласа ярасси çинчен США çар министерстви кăларнă коммюнике

Америкăри Пĕрлешуллĕ Штатсен çар министерстви çакăн пек коммюнике пичетлесе кăларнă: «Европăра Америкăри Пĕрлешуллĕ Штатсен хĕçпăшаллă вăйĕсен операцийĕсене пуçласа ярасси çинчен паян пĕлтернĕ. Генерал-майора Дуайт Эйзенхауэра, генеральнăй штаб начальникĕн оперативлă управленийĕн ĕçлекен помощникĕ пулнăскере, Европăри вăрçă ĕçĕсен командующийĕ пулма уйăрса лартнă. Унăн штабĕ Лондонра пулать».

Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, генерал Эйзенхауэр Лондона пырса çитнĕ.

Нимĕçсен çĕнтерес шанчăксем путланса пыраççĕ
Гитлерла пичет Германи халăхĕ ÿпкелешни вăйлăланса пынинчен шикленет

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 25-мĕш. (ТАСС). Германи халăхĕ хушшинче вăрçа хирĕçле шухăш-кăмăлсем вăйланса пынă пирки, вăрçа курайми пулнă туртăмсем кунран-кунах ÿссе пынă пирки, пурнăçра нимĕн те çитсе пыманнипе тарăхни сарăлса пынă пирки Гитлерла хаçат-журналсем час-часах шикленÿллĕ статьясем пичетлесе кăлара пуçларĕç.

«Дейче рундшау» ятлă хаçат хăйĕн умстатьинче çапла çырать: «Халĕ пурте вăрçă çинчен кăна калаçаççĕ. Çынсем хăйсен сăмсисене тивĕçлĕ мар çĕрелле пырса чикме тăрăшаççĕ, хăйсене хăйсем пуринчен те ăсларах пулнă пек тыткалама хăтланаççĕ, вĕсем хăйсене пур ĕçе те ыттисенчен лайăхрах туса, юсаса яма пултарнă пек кăтартма тăрăшаççĕ, ыттисем, вĕсен шухăшĕпе, пĕр ĕçе те вĕсем пек пĕлсе тума пултараймаççĕ, пăсаççĕ кăна пулать вара. Фронтра пулнă салтаксем темĕскер те каласа кăтартаççĕ. Акă поезд çинче пурте салтак каласа кăтартнине итлеççĕ. Лешĕ —фронтра çимелли нимĕн те çук, салтаксене пыйтăсем çисе яраççĕ,—тесе кастарать. Пĕр-пĕр тĕлте мĕн те пулин пулсан, ун çинчен вара вăл хăй пулман вырăн ниçта та юлман пекех каласа кăтартать. Çавăн пек çынсен сăмахĕ тăрăх пăхсан, «пĕтĕм халăхăн шухăш-кăмăлĕсем йăлтах начарланса çитнĕ», е «малалла текех кун пек пулсан, пĕтесси кăна тăрса юлать».

«Индерландише Тагесцейтунг» ятлă хаçат çырать: «Вăрçă вăхăтĕнче эпир хуйхăрса, хăраса, темĕскер çине шанса кăна пурăнатпăр, çакă вара тем тĕрлĕ сас-хура çуратса тăрать».

«Националь цейтунг» хаçат çапла çырать: «Пурнăçа вилĕм хупăрласа тăрать, пире пурнăçпа вилĕмĕн шăмăллă аллисем ярса илнĕ. Пире ĕç йывăрлăхĕ, тăхлан пек йывăр ывăну лапчăтса çĕр çумне пусарса тăрать».

Чили правительстви Германие асăрхаттарни

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 25-мĕш. (ТАСС). Чили правительстви Германие, Италие тата Японие çакна асăрхаттарса пĕлтернĕ: Лăпкă тинĕс çинче Панамăпа Антарктика хушшинче Америкăри пĕр-пĕр республикăн суднине путарсан е тата Панама каналĕпе Кăнтăр Америкăн хĕвеланăç çыранĕсем çине мĕнле те пулин тапăну пулсан, Чили дипломатиллĕ çыхăнусене малтан татмасăрах вăрçă пуçласа ярать, тенĕ.

Югослави партизанĕсем Цетинье тата Никшич крепоçсене çавăрса илнĕ

ЛОНДОН, июнĕн 25-мĕш. (ТАСС). Лондона çитнĕ хыпарсем тăрăх, Югослави партизанĕсем Итали войскисене тусем çине хăваласа кĕртсе янă. Итальянецсенне юлашки крепоçĕсене — Цетиньене тата Никшича — çавăрса илнĕ. Итальянецсен çав крепоçсенче тăсăлса юлнă салтакĕсем снабжени тĕлĕшĕнчен сывлăшран самолетсем çинчен пăрахса панипе кăна тытăнса тăраççĕ.

Англи авиацийĕ Сен-Назер çине вĕçсе пырса тапăнни

ЛОНДОН, июнĕн 25-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: июнĕн 25-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем подводнăй лодкăсен Сен-Назерти бази çине вĕçсе пырса тапăннă. Истребительсем противникăн аэродромĕсене атакăланă. Англи самолечĕсем каялла хăйсен базисене пурте тĕрĕсех таврăннă. Противникăн 5 самолетне пĕтерсе тăкнă.

Англи авиацийĕ Эмден çине тапăннин результачĕсем

ЛОНДОН, июнĕн 25-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин сывлăшри разведки çакна лайăх пĕлсе илнĕ: Англи авиацийĕ июнĕн 23-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Эмден хули çине вăйлăн тапăннă чухне хулана пысăк сиен кÿнĕ. Хулара тĕм сарлакăш территорисем пачах çаралса юлнă. Доксене чылай пысăк сиен тунă. Самолетсем тапăннипе тухнă пушарсем чугунçулăн тĕп станцийĕн районĕнче июнĕн 23-мĕшĕнче кăнтăрла та кунĕпех сÿннĕ. «Нордзеоверке» фирмăн подводнăй лодкăсен верфĕсене вăйлăн сиенленĕ. Çав верфьсен склачĕсем çунаççĕ.

Треллеборг хулинче фашизма хирĕçле демонстраци пулса иртнĕ

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 25-мĕш. (ТАСС). Июнĕн 22-мĕшĕнче Треллеборг хулинче (Швецин кăнтăр пайĕнче) Швеци фашисчĕсене хирĕç халăх хумхануллă демонстраци туса ирттернĕ. Шведсен Лендхольм пуçпулса ертсе пыракан фашистла партийĕ хула площадĕнче митинг тума хăтланнă. Пухăннă хула халăхĕ: «предательсене — вилĕм!» тесе кăшкăрса трибуна патне кĕрлесе пынă та, фашистсен трибуна çинчи ораторне сирпĕнтерсе янă.

Тобрука хăварни çинчен Англири хаçат-журналсем мĕн çыраççĕ

ЛОНДОН, июнĕн 25-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, англичансен Ливири ĕçĕсем ăнăçлă пулманни Лондонра тата провинцисенче тухса тăракан хаçат-журналсене хытă кÿрентернĕ. Вĕсем тарăхса çыраççĕ. Хаçатсем нумайĕшĕсем çакна хыттăнах палăртса калаççĕ: парламент та, хамăр çĕршыв та Ливири ĕçсем пирки татăклăн ăнлантарса парассине кĕтеççĕ.

«Дейли геральд» хаçат çапла çырать: «Мĕнле сăлтавсем пирки çавăн пек пулса тăнине лайăх тĕпчесе тухмалла. Йăнăшсемшĕн кам ответлă пулса тăнине тĕрĕссипе каласа кăтартмалла. Ливире пысăк, ниме тивĕççĕр йăнăш пулса тăнă, уншăн айăплисене Англия каçарма пултараймасть. Анчах та кирек мĕнле пулсан та, Ливире пулнă йăнăшсем пирки Англи халăхĕ хушшинче никам та алăсене усакан пулас çук. Кашни гражданинах малашнехи татах та йывăртарах ĕçсене тумашкăн пулăшас тесе хăйĕн мĕн пур вăй-хăвачĕпеваскать. Анчах та çав вăхăтрах кашни гражданинах правительствăран çакна çине тăрсах ыйтать: правительство пирĕн ĕçсем чылай тĕлте ăнăççăр пулса тухнин мĕнпур сăлтавĕсене хăй енчен пĕтĕм тарăнăшпех ăнланса илнине хăйĕн ĕçĕнче кăтарттăр».

«Таймс» хаçатăн умстатьинче çапла каланă: «Пире çĕнтернипе вĕçленнĕ пĕр çапăçу—пире çĕнтерес кампани мар-ха вăл... Англичансен задачи—Роммеле Египет çулĕпе малалла куçма чарса лартасси, ăна каялла хĕвеланăçнелле хăваласа яма вăйсем пухасси пулса тăрать. Çавна ăна англичансен тумаллах, ăна тума май пур. Анчах та ăна тума ку таринччен методсене, тактикăна тата плансене те тĕпренех çĕнетес пулать».

Англи авиацийĕн эрне хушшинчи ĕçĕсем

ЛОНДОН, июнĕн 25-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, июнĕн 21-мĕшĕнче пĕтĕм эрнен пуçламĕшĕнче, санталăк начар пулнă пирки, Англи авиацийĕ вăйлă çапăçма пултарайман. Анчах та эрне юлашки кунĕсенче унăн активлăхĕ ÿснĕ. Бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем çурçĕр-хĕвеланăç Германири Эмден, Оснабрюке тата ытти объектсем çине те вĕçсе кайса тапăннă, çавăн пекех тата противникăн Голландири аэродромĕсене те атакăланă. Июнĕн 20-мĕшĕнче кăнтăрла 300 ытла истребитель, Гаврти объектсем çине бомбăсем пăрахма вĕçсе кайнă «Бостон» йышши бомбардировщиксене хÿтĕлесе пынăскерсем, Çурçĕр Францин тинĕс хĕрринчи районне атакăланă. Çавăн пекех тата Булонь, Кале тата Дюнкерк районĕ çине, Рурпа Рейн облаçĕсем çине, подводнăй лодкăсен Сен-Назер бази çине, Голланди çыранĕсем патĕнчи суднăсем çине вĕçсе кайса тапăннă.

Сывăхри Хĕвелтухăçĕнче Англи авиацийĕ пуринчен ытла противникăн тинĕс çĕр çинчи войскисем куçнă чухне унăн снабжени линийĕсене çĕмĕрме тăрăшнă.

Ливири вăрçă

ЛОНДОН, июнĕн 23-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: тĕрĕслеме ĕлкĕреймен сведенисем тăрăх, июнĕн 22-мĕшĕнче противник, Англин мотоколоннисене Киренаикăран Египета талла чакма кансĕрлес шутпа, самолетсем çинчен парашютлă чăссем антарнă. Анчах та апла хăтланса пăхни пысăк ÿсĕмсем паман. Нимĕçсен 21-мĕш бронетанковăй дивизийĕн танкĕсем халĕ чикĕ патнелле наступлени туса пыраççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЗАВОДУ ТРЕБУЮТСЯ:

инженеры и техники, технологи по холодной обработке металла и нормированию, квалифицированные бухгалтера и кладовщики, а также **квалифицированные рабочие**: токари, строгальщики, термисты, слесари водопроводчики, жестянники, слесари по сварным и железным конструкциям, электросварщики, инструментальщики, формовщики, обрубщики, лакоеары, прессовщики, кузнец-молотобоец, шорник-смазчик, печник, штамповщицы, установщики штампов и пресс-форм, машинисты (компрессоров, литья под давлением и насосов), наборщики-печатники, маляры, каменщики, штукатуры, стекольщик, ящечник, упаковщики, плотники, подсобные рабочие, рузчики, уборщицы-курьеры.

ТРЕБУЮТСЯ пожарные работники и вахтеры-охранники (мужчины и женщины), которые обеспечиваются общежитием.

ПРИНИМАЮТСЯ переквалификанты. Приглашаются учащиеся старших классов средних школ на постоянную и временную работу.

В текущем году при заводе начнет функционировать вечерний электромеханический техникум (без отрыва от производства).

Обращаться по адресу: г. Чебоксары, Ленинградская, 38, бюро пропусков.
2—1.

ЧЕБОКСАРСКОМУ ОТДЕЛЕНИЮ ЧУВАШТОРГА ТРЕБУЮТСЯ:

агенты-заготовители для работы в районах: Ядринском, Красноармейском и Аликовском.

ТРЕБУЕТСЯ УПРАВДЕЛАМИ

Обращаться по адресу: гор. Чебоксары, ул. Новая, 22, Коммунально-Строительный Техникум.

Чебоксарскому хлебокомбинату

срочно требуется на постоянную работу экономист.

ЧУВАШМЕТРОВЕС

заключает договора с организациями на ремонт, технадзор и установку крупных весоизмерительных приборов.

Обращаться по адресу: гор. Чебоксары, улица Ворошилова, 46.
3—1

ЧЕБОКСАРСКИЙ ГОРСОБЕС

просит всех получающих пенсию или пособие, переменивших свое прежнее местожительство, сообщить в Горсобес свой новый адрес не позднее 1 июля 1942 года. Не сообщение адреса приостановит доставку пенсии на дом.
2—2. ГОРСОБЕС.

ЧУВАШСКИЙ ГОСУДАРСТВЕННЫЙ ПЕДАГОГИЧЕСКИЙ ИНСТИТУТ

в гор. Мариинском Посаде об'являет прием студентов на все курсы и факультеты на 1942—43 учебный год.

ПЕДАГОГИЧЕСКИЙ ИНСТИТУТ имеет факультеты: истории (подготовляющий преподавателей истории для средних школ и техникумов); языка и литературы с отделениями: чувашского и русского языка и литературы (подготовляющее преподавателей чувашского и русского языка и литературы в чувашских средних школах и техникумах) и русского языка и литературы (подготовляющее преподавателей русского языка и литературы для средних школ и техникумов); физики и математики с отделениями: физики (подготовляющее преподавателей физики для средних школ и техникумов) и математики (подготовляющее преподавателей математики для средних школ и техникумов) и естествознания (подготовляющий преподавателей биологии и химии для средних школ и техникумов).

Срок обучения в Пединституте — 3 года. На I курс принимаются без испытания все граждане, окончившие в 1941 и 1942 г.г. средние школы на «отлично» и «хорошо», а остальные, окончившие в эти годы средние школы, принимаются без испытаний при наличии вакансий.

Испытания будут происходить с 10 по 29 августа. Начало учебных занятий 1 сентября. Все студенты обеспечиваются общежитием, отличникам предоставляется стипендия.

От платы за обучение освобождаются дети рядового и младшего начальствующего состава, дети пенсионеров, инвалиды, направленные на учебу органами Собеса, и нуждающиеся студенты из числа стипендиатов.

Заявления о приеме и документы (автобиография, аттестат в подлиннике, три фотокарточки и справку об отношении к воинской обязанности (для военнообязанных) направлять по адресу: Чувашская АССР, гор. Мариинский Посад, Пединститут.

ДИРЕКЦИЯ.

НАРОДНЫЙ КОМИССАРИАТ ФИНАНСОВ ЧУВАШСКОЙ АССР

об'являет, что на основании ст. 30 закона о подоходном налоге с населения, принятого VI сессией Верховного Совета Союза ССР 4-го апреля 1940 года, все предприятия, учреждения и организации, расположенные на территории Чувашской АССР, обязаны не позднее 15 июля 1942 года сообщить соответствующим районным и городским финансовым отделам необходимые для обложения налогами сведения за июнь месяц о выплаченных суммах разным лицам за поставленные изделия, сельскохозяйственные продукты, дикорастущие плоды, ягоды и лекарственно-техническое сырье, произведенные работы, оказанные услуги и т. п.

В сведениях указываются: фамилия, имя, отчество и местожительство лица, которому произведены выплаты, номер его паспорта и кем он выдан, сумма выплаты, за что и за какой период выплачена эта сумма, а также на чьем материале выполнялась работа.

Предприятия, учреждения и организации, не представившие указанных сведений за предыдущие месяцы, представляют эти сведения за время с 1-го июля 1941 года по 30-ое мая 1942 года к 1-му июля 1942 года, а в последующие месяцы не позднее 15-го числа каждого месяца за предыдущий месяц.

За несвоевременное или неполное представление указанных сведений лица, ответственные за представление сведений, подвергаются штрафу до 100 руб.

Представление заведомо неверных сведений влечет за собой ответственность в уголовном порядке.

НАРКОМФИН ЧУВАШСКОЙ АССР.

В. ДОЛГОВ

Çурхи калавсем

(Юлашки. Пуçламăшĕ 145-мĕш номерте).

4. Виçĕ паттăр

«Простые люди русские
Стоят у стен седых,
И щели дзотов узкие
Закрыты грудью их»
Н. ТИХОНОВ.

Вĕçĕ-хĕррисĕр В. вăрманĕ. Симĕс-симĕс чăрăшсем айĕнче унта та кунта çĕрпÿртсем пытанса лараççĕ. Вĕсенчен пĕрринче Иван Герасименко пурăннă. Красноармеецсем, Герасименко вырттса тăнă чĕтесе, унăн вырăнне, çак юлташăн ятне ăшă сăмахпа асăнса, типтерлĕ пăхса усраççĕ, — ăна, çак вырăна, халлĕхе йышăнмаççĕ.

— Иван вырăнĕ, Иван килмелле...— теççĕ вĕсем.

Ирсерен е каçсерен, проверка вăхăтĕнче, старшина унăн ятне список тăрăх асăнать.

Стена çинче геройăн портречĕ çакăнса тăрать. Украина çынни, Украина халăхĕн чаплă ывăлĕ, — пит тулли кăмăл, куçĕсем чĕрĕ, инçете-инçете пăхаççĕ...

—Акă вăл, пирĕн ĕмĕр манми тусăмăр, Иван, кунтах вăл,—теççĕ. Унăн юлташĕсем, паттăрăн сăнĕ çине кăтартса.

...Çак вăрмантах тата тепĕр çĕрпÿрт ларать. Унта Александр Красиловпа Леонтий Черемнов пурăннă. Вĕсем Иван Герасименко тусĕсем. Кунта та çавăн пек хисеплĕх, чыслăх...

Красиловпа Черемнов — Çĕпĕр çыннисем, пĕр вырăнта ÿснĕ тусем, сунарçăсем. Александрпа Леонтий Хĕрлĕ Çара та иккĕн пĕрле килнĕ, пĕрле пурăннă, вĕреннĕ, кĕрешнĕ... Колхозра, шахтăра ĕçленĕ, — вĕсем пулнă шахтерсем, çарта — иккĕшĕ те паллă пулеметчик. Кĕрхи йĕпе-сапара, хĕллехи шартлама сивĕре те ĕçленĕ вĕсен пулемечĕ, фашистсене хĕртнĕ, пере-пере антарнă...

— Хăш чухне, савăннипе, юрласа яратчĕç пирĕн тусем, Александрпа Леонтий, — асăнаççĕ икĕ паттăра вĕсен юлташĕсем.

Халĕ ĕнтĕ çак виçĕ тус, виçĕ паттăр çук!

Çав юлташсем, Герасименко, Красилов, Черемнов тĕлĕнмелле çапăçса вилнĕ. Вĕсем хăйсен вилĕмĕпе теприсен вилĕмне çĕнтерсе, чĕррисен пурнăçне çăлса хăварнă, — хисеплер, асăнар çак паттăрсен вилĕмсĕр ячĕсене!

* * *

Каçхине, вăрман тĕттĕмленсе çитсен, кĕçĕн лейтенант Поленский чи кăмăллă, чи хавтăр юлташсене чĕнсе илсе разведкăн задачи çинчен каласа панă. Вĕсем çеç, çак юлташсем çеç, ку чухне çак йывăр задачăна пурнăçлама пултарнине вăл лайăх пĕлнĕ.

Тепĕр çур сехетрен вара çирĕм боец пĕр лапамалла, шур юр çийĕн упаленсе вăрттăн шуса пынă. Пĕлĕтре пин-пин çăлтăр çунса ялкăшса тăнă. Ура айĕнче çемçе юр йăлтăр-йăлтăр çиçнĕ.

Инçе те мар Н. хули—авалхи хула.

Вырăс çĕрĕ, вăрманĕ, вырăс хĕлĕ ыттлана пирĕн паттăрсене, хавхалантарнă, вăй панă...

Вĕсем хушшинче, паллах, Герасименко, Красилов, Черемнов юлташсем—Ленин—Сталин партийĕн чаплă ывăлĕсем чи малти вырăнта пулнă. Вĕсем ялан хи пекех шиксĕр утнă.

— Эсир, юлташсем, малти дозор пулатăр, — тенĕ вĕсене командир Поленский. Хăюллă дозор вара малалла кайнă, утмалла çĕрте утнă, шумалла çĕрте хырăмпа шунă.

Çак вăхăтра ĕнтĕ умра икĕ мĕлке курăнса кайнă. Иккĕшĕ те ют. Камсем? Паллах, фашистсем. Герасименко гранатине малтанах хатĕрлесе пынă, халĕ вăл ăна пĕр самант хушшинче фашистсем çине вăркăнтарнă, — ыйхăланă, сивĕпе ĕнтĕркенĕ фрицсем çĕр татăк пулса выртнă. Çакăн хыççăн вара нимĕçсем дзотсенчен вĕçĕмсĕр пеме тытăннă. Пирĕн разведчиксем те вĕсене хирĕç хаяррăн пеме пуçланă.

Çапăçу хĕрсех пынă. Калама çук хаярланнă...

Герасименко аманнă. Çумăр пек тăкăнакан пульăсем айĕн ун патне санитар Степан Дубина васкаса чупса пынă, бинтпе туртса кăларнă та Герасименко юлташăн суранне çыхма тытăннă.

— Кирлĕ мар! — тенĕ çапăçура хĕрсе кайнă сержант Герасименко çирĕп сасăпа. Ку чухне вара Дубина хăйĕн командирне чи пуçласа итлемен: унăн суранне хăвăрт çыхнă та палкаса тухакан ăшă юна юхма чарнă.

— Каялла таврăн! — приказ панă взвод командирĕ Поленский. Герасименко хăйĕн командирĕ хушнине пирвайхи хут итлемен: вăл малтан мала кайса пынă, дзот хыççăн дзот пĕтерсе, совет воинĕсен ушкăнне валли çул уçнă.

... Шăпах çак вăхăтра тăшманăн тата виçĕ дзочĕ ĕçлеме тытăннă, — ку таранччен вĕсем паллă пулман, хăйсем пуррине систермен. Виçĕ дзотран пăр пек çавакан пульăсем вĕçнĕ, вилĕм юррине юрланă. Разведчиксем вут ăшне лекнĕ. Паттăрсен пурнăçĕ çинçелсе çитнĕ. Эх, пурнăç, пурнăç, санран хаклă мĕн пур ши? — пырса кĕнĕ кашнин пуçне юлашки шухăш.

— Тăван çĕршывшăн!—кăшкăрса янă харсăр Герасименко.

— Сталиншăн! — тенĕ те пĕтĕм вăйпа чупнă Красиловпа Черемнов.

Акă виçĕ дзот вĕсен умĕнчех, акă пуля... Пульăсем шăхăраççĕ, пин-пин пуля... Анчах та Герасименко, Красилов, Черемнов юлташсем нимĕнрен те хăраман: вĕсем, улăп пек паттăррăн чупса пырса, хăйсен кĕлеткисемпе, çамрăк кăкăрĕсемпе усал вилĕм шăтăкĕсене хупласа лартнă. Виçĕ дзотăн амбразурĕсем тинех ĕнтĕ питĕреннĕ: фашистсен пулемечĕсем паттăрсен кăкăрĕсене ала пек шăтарса пĕтернĕ, вĕсен чĕрисем çурăлса кайнă, çапах та тăхланпа кĕрешнĕ, тăхлан хаклă юнпа çăвăннă. Паттăр кăкăрсем çаплах вилĕм шăтăкĕсене хупласа тăнă...

...Герасименко, Красилов, Черемнов юлташсен хăюлăхне пула пирĕн разведчиксем çитес çĕре çитнĕ, тăвас ĕçе тунă, пĕлес тенине пĕлнĕ, 8 дзот аркатнă, 55 фашистăн пуçне çапса лаптăтнă. Çапла вара юмахри пек паттăрсен чаплă вилĕмĕ совет çарĕсен çĕнĕ утăмĕсем валли çул уçнă. Вăл çул такăр мар—тумхахлă, анчах чаплă, хисеплĕ çул. Такăр мар! Такăр мар-тăк, такăрлар!

* * *

...Эй, тăван сыруçăмсем, çĕршыври чаплă юрăçăсем! Эсир çак совет çĕршывĕн чаплă ывăлĕсем çинчен, Иван Герасименко, Александр Красилов, Леонтий Черемнов çинчен юрăсем хурăр, хĕвелпе тан тăрса сăрнайсем калăр! Сирĕн чаплă сăвvăрсене пĕтĕм халăх вулатăр, кĕрнеклĕ юррăрсене юрлатăр, тăван çĕршыв савăнса итлетĕр!.. Сирĕн юррăрсен кĕввисем Атăл урлă, тинĕс урлă вĕçчĕр, вĕсене Герасименко, Красилов, Черемнов юлташсем тăван çĕршывăн таса тăпри витĕр илтчĕр!

Действующи арми.
Апрель—май, 1942 ç.

РЕДАНЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0-67, редакци секретарĕн—4-26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5-31, ялхуçалăх пайĕн — 3-99, комсомол пурнăç пайĕн — 0-85, издательство конторин — 0-23.

НТ 524 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 319. Ф. 6. 58 64 п. л.